# КРЫМ СĂВВИСЕМ



Василий Давыдов-Анатри

Ак Ай-Петри çÿлте
Кармашать пĕлĕте.
Эпир ун тăррипе
Çул çÿрен туссемпе
Вĕçтеретпĕр пĕрле.
Хĕвелтухăçнелле.
Таса чулăн туне,
Ун асам тÿпине
Пуç таять мĕн иртен
Пĕтĕм чун-чĕререн.
Çак Ай-Петри çинче,
Çÿлте, чăн тÿпинче,
Çĕн тĕнче çыннисен,
Партизан тăвансен
Вил тăпри упранать.
Халь Ай-Петри ăна
Çĕр-анне ячĕпе
Çĕклет хăй аллипе.
Вилĕмпе çапăçма,
Вилĕме тĕп тума.
Пурнăç, пурнăç, сана,
Чыс-мухтав яланах!
Çÿл Ай-Петри çинчен
Чун-чĕрем туличчен
Пăхрăм тинĕс çине,
Уçрăм ун çитине,
Тытрăм кăкăр çумне
Çут хумсен çăлтăрне.
Кĕрхи кун саламне,
Эпир ыр суннине,
Ил, Ай-Петри, пиртен,
Çул çÿрен çынсенчен.

### МĔСКЕР ЮЛАТЬ...

Шутларăм эпĕ пĕр пĕччен:
Мĕскер юлать эпир вилсен!
Юлаççĕ пирĕн сăвăсем,
Савса юрланă юрăсем,
Çĕршыв-аннешĕн çырнисем,
Чунра çунат çуратнисем.

### АЛТĂР ÇĂЛТĂР

Пĕрре, çуллахи каç, çĕрле
Якур Ефимовпа пĕрле
Утса çÿретпĕр Ялтăра,
Сăнатпăр Алтăр çăлтăра.

Вылять-çке çăлтăр тÿпере,
Вĕçсе анать тинĕселле,
Кас чаршавне сире-сире
Сÿнми телей сунать пире.

Каллех пăхатпăр çÿлелле,
Чун савнă çăлтăр, эс итле:
Сана курни сăвап пулсан,
Умри сукмак çине ансам.

### ПОЭТ ЧĔРИ

Пурнăçланă поэт хушнине:
Ялтăра Луговской чĕрине
Хунă-мĕн çÿрен çул хĕррине,
Чĕре евĕр чул ту варрине.
Чĕрĕ чух вăл каланă çапла:
«Чĕре çирĕп, чул пек пулмалла.
Чул вăл сивĕ, çапах та вĕри
Пултăр сăвăç çунатлă юрри...»
Çавăнпа, тен, çак чул варрине
Ĕмĕре хунă ун чĕрине.
Халĕ акă, хĕвел анаспа,
Унта пытăм юлташ-тусăмпа.
Калаçатпăр эпир поэтпа,
Чыс тăватпăр ăна сăвăпа.
Çак сăвва Луговской хăй тăнлать,
Пирĕнпе вăл пуплет чăвашла.
Ăнланатпăр эпир, чун туять,
Пĕр-пĕрне ĕмĕрхи тăванла.

### СИПЛĔХ ПУЛЧĔ

Эп манас çук ĕмĕрне:
Кăнтăр иçĕм çырлине,
Витĕр çутă сăнлине.
Çирĕм, пычĕ чĕрене,
Сиплĕх пулчĕ.

Эп манас çук ĕмĕрне:
Мелитополь арпусне,
Шурăмпуç пек хĕрлине.
Çирĕм, пычĕ чĕрене,
Сиплĕх пулчĕ.

Эп манас çук ĕмĕрне:
Çÿлĕ чул ту мăйăрне,
Тутлă тутă кĕнине.
Çирĕм, пычĕ чĕрене,
Сиплĕх пулчĕ.

Эп манас çук ĕмĕрне:
Хĕвел пахчи ырлăхне —
Мукусăни эрехне.
Ĕçрĕм, пычĕ чĕрене,
Сиплĕх пулчĕ.

### АЙ-ПЕТРИ

Юрлать хĕрнĕ хĕвел.
Кĕрхи кĕмĕл тенкел,
Кăвак тăвăн айкки,
Учан-Су шыв сикки
Вĕлт иртеççĕ умран,
Çухалаççĕ куçран.

### ИРХИ ТУЙĂМ

Ирхине, тĕнче шăп вăхăтра,
Пĕр автан авăтать Ялтăра.
Эп итлеп çакă çывăх сасса
Кăмăлтан, ача пек юратса.
Тухса тăчĕ йăлтах ман ума
Тăван кил çĕклесе юррăма.
Ак çаплах авăтать пĕр автан,
Туйăнать салам килнĕн ялтан.

### САЛАМ САНА, ГУРЗУФ!

Çÿрерĕм эпĕ Гурзуфра,
Вăл юлчĕ ĕмĕр асăмра.
Çак вырăнта упа-туне
Вăл тинĕсрен шыв ĕçнине
Сăнарăм эпĕ чылайччен,
Чăрр пăхрăм унăн куçĕнчен.
Çак вырăнта юланутпа,
Сиксе ташлан урхамахпа,
Çÿренĕ Пушкин тусĕпе,
Леш генерал Раевскипе.
Поэт юратнă тинĕсе,
Ăна савса хисеплесе,
Суйланă хÿхĕм сăмахсем,
Шăратнă сăвă-юрăсем.
Пĕр яштака кипариса
Поэт чунтан сума суса,
Шутланă тусĕ вырăнне,
Куллен çул тытнă ун патне.
Çÿл кипарис айне тăрса,
Тинĕселле пуçне тайса,
Поэт вуланă сăввине,
Чипер Гурзуфшăн çырнине.
Эп ак поэт сукмакĕпе,
Персик, магноли хушшипе
Анатăп тинĕс хĕррине,
Илтеп Шаляпин сассине.
Кунта вăл, тинĕс кукринче,
Çÿлте, шур чулăн тÿпинче,